**Ф.М. Лукин музейне уçнă чух**

*Георгий Ефимов,*
Чăваш халăх поэчĕ

Çавалçырма, Чатукасси —
Чуна ялан та çывăх.
Янрать маттур Лукин сасси,
Кĕвви — итлен те — ырлăх!

Чатукасси яш Хĕлипе
Çула тухма ăс панă.
Çунат вăл сарнă кăйкăр пек,
Çĕн хавалпа вăйланнă.

Кĕçех вăл Атăл хĕррине
Телей сукмакĕ хывнă,
Шăрантармашкăн юррине
Пĕлӳ илсе вăй пухнă.

Сасартăк аслă çĕршыва
Хыпать хаяр вут-çулăм.
Парать юрри çынна хăват, —
Кĕрет вăрçа кун-çулшăн.

Çитет сывах Шупашкара
Вăй-халлăн композитор.
Вăл тăнăç пурнăçшăн тăрать:
«Час мирлĕ пурнăç çиттĕр!»

Ак Çĕнтерӳ!.. Тăнăçлăхра
Ун юррисем хĕреççĕ.
Чăвашра çеç-и? Мускавра
Ăна аван пĕлеççĕ.

Лукин! Çавалçырма ачи
Пуласлăхшăн ĕçлерĕ.
Ун юраллă таса пахчи
Чăваш ятне çĕклерĕ.

1997[1]

---

[1] Опубликовано: Ялав, 2003. Утă уйăхĕ, 7 №. 72 с.